Литературăпа искусствăри чи лайăх произведенисемшĕн тата концертсенче пысăк ăсталах кăтартнăшăн К.В. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш АССР государство премине памалли йĕрке // Тăван Атăл. – 1966. - № 2. – С. 25; Ялав. – 1966. - № 3. – 2 с. обл..

# Литературăпа искусствăри чи лайăх произведенисемшĕн тата концертсенче пысăк ăсталăх кăтартнăшăн К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш АССР Государствă премийĕ памалла тăвасси çинчен

Литературăпа искусствăна малалла аталантарас тата литературăпа искусствăри чи лайăх произведенисемпе ĕçсемшĕн хавхалантарас тĕллевпе Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çакăн пек постановлени йышăнать:

1. Литературăпа искусствăра чи чаплă произведенисемшĕн тата концертсенче пысăк ăсталăх кăтартнăшăн кашни çулах К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш АССР Государствă премийĕ — 1000 тенкĕлĕх пĕр преми памалла тăвас.

2. Литературăпа искусствăри чи чаплă произведенисемшĕн тата концертсенче пысăк ăсталăх кăтартнăшăн К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш АССР Государствă премине парас йĕркене çирĕплетес (Постановлени хыççăн аялта пичетленет.— Ред.)

3. К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш АССР Государствă премине парас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссие çак çынсене кĕртес: Егоров Н. Е. — Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн заместителе (председатель), Маркелов И. А. — Чăваш АССР Культурă министрĕ (председатель заместителĕ), Алга А. Е., Алексеев Б. А., Ермолаева Р. М., Каширская М. Е., Кузнецов И. Д., Лукин Ф. М., Марков Б. С., Осипов П. Н., Романова Ф. А, Сироткин М. Я., Спиридонов М. С., Хирбю Г. Я., Хузангай П. П., Эсхель А. А., Якимов М. Н.

4. К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш АССР Государствă премине илнĕ çынсене «К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш АССР Государствă премийĕн лауреачĕ» ятне параççĕ.

Лауреатсене К. В. Иванов бюсчĕн барельефне ўкерне хисеплĕ паллăпа диплом памалла тăвас.

## Литературăпа искусствăри чи лайăх произведенисемшĕн тата концертсенче пысăк ăсталăх кăтартнăшăн К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш АССР Государствă [премине] памалли

# ЙĔРКЕ

1. К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш АССР Государствă премине литературăпа искусствăри чи лайăх произведенисемшĕн тата концертсенче пысăк ăсталăх кăтартнăшăн параççĕ. Çав произведенисен ĕççынnисене коммунизмла воспитани парас хăвачĕ вăйлă пулмалла, социализмла реализм принципĕсене тивĕçтермелле тата халăхра малтанах пысăк хак илмелле.

2. К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш АССР Государствă премине илме произведенисемпе ĕçсене Чăваш АССР министерствисемпе ведомствисем, творчествăлла союзсем, журналсемпе хаçатсен редколлегийĕсем, Чăваш АССР кĕнеке издательстви, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи наукăпа тĕпчев институчĕ, предприятисен, учрежденисен, колхозсемпе совхозсен коллективĕсем, вĕренў заведенийĕсем тата Чăваш АССРĕнчи ĕççыннисен обществăлла организацийĕсем тăратма пултараççĕ.

3. Государствă премине парас тесе пăхса тухма йышăннă произведенисемпе ĕçсен ячĕсене, авторĕсене кăтартса, республикăри «Советская Чувашия» тата «Коммунизм ялавĕ» хаçатсенче пичетлесе кăлараççĕ.

4. Преми илме пичетре пĕтĕмпех тухса пĕтнĕ литературă произведенийĕсене çеç тăратма юрать; музыкă, театр тата художествă произведенийĕсемпе халăха малтанах тĕплĕн паллаштарас пулать.

5. К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш АССР Государствă премине илме коллективсен кандидатурине тăратас пулсан, унта произведение е пĕр-пĕр ĕçе çырнă тĕп авторсене кăна кĕртеççĕ; ун чухне произведенин пĕлтерĕшĕ, унăн идейăпа художествăлла хакĕ çўллĕ пусăмра тăни хăш авторсем ытларах вăй хурса ĕçленинчен килнине шута илеççĕ.

6. К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш АССР Государствă премине пама тăратнă произведенисемпе ĕçсем майăн 15-мĕшĕччен пичетленнисем (е сцена çинче кăтартнисем) пулмалла. Çав произведенисемпе ĕçсене комисси тепĕр çулхи майăн 1-мĕшĕччен йышăнать.

*Преми комиссийĕ преми парасси çинчен йышăннă хăйĕн сĕнĕвĕсене Чăваш АССР Министрĕсен Советне çуллен октябрĕн 10-мĕшĕччен тăрататъ.*

К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш АССР Государствă премине пуçласа 1967 çулта 1965—1966 çулхи литературăпа искусствă произведенийĕсемшĕн параççĕ.

7. К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш АССР Государствă премине авторсен коллективĕсене панă чухне акă мĕн шута илмелле: произведение икĕ автор çырнă пулсан, премие вĕсен çурмалла пайламалла; коллективра виçĕ автор пулсан, вĕсен руководительне премин çуррине параççĕ, ытти икĕ авторĕ юлашкине çурмалла пайлать; коллективра тăватă е ытларах çын пулсан, вĕсен руководителĕ премин пĕрре виççĕмĕш пайне илет, юлашки иккĕ виççĕмĕш пайне ыттисем хăйсем хушшинче пĕр тан пайлаççĕ; авторсен коллективĕ руководительне кăтартмасан, преми пурне те пĕр пек тивет.

8. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Государствă премине кама пани çинчен йышăннă постановление «Советская Чувашия» тата «Коммунизм ялавĕ» хаçатсенче пичетлесе кăлараççĕ.

9. К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш АССР Государствă премине илнĕ çынсене «К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш АССР Государствă премийĕн лауреачĕ» ятне тата дипломпа хисеплĕ палла параççĕ.

К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш АССР Государствă преми лауреачĕн хисеплĕ паллине Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ е унăн заместителĕ парать.

К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш АССР Государствă преми лауреачĕн хисеплĕ паллине кăкăрам сылтăм енне çакмалла.

10. К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш АССР Государствă премине илме ĕçсемпе материалсене мĕнле йĕркепе тăратассине преми комиссийĕ тĕплĕн кăтартса парать.

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ ЭКЗ. [illegible]
ДОСТАВЛЕН
Чувашской Книжн. Палате
2 апреля 1966